Районăн ĕçчен çыннисем

# Продуктивлăх кашни ĕçченрен килет



Сăн ӳкерчĕкре эсир ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свобода» пĕрлешӳллĕ хуçалăх-заводăн 2-мĕш ĕне фермин ветеринари фельдшерне Галина Алексеевна Григорьевана **(сăн ӳкерчĕкре сулахайри)** тата Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн Уйкас Янасалти ĕне фермин техник-осеменаторне Луиза Германовна Федорована **(сăн ӳкерчĕкре сылтăмри)** куратăр. 31 çул каялла Чулхула облаçĕнчи училищĕре ветеринара вĕреннĕ юлташсем паян районăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче вăй хураççĕ пулсан та, тăрăшулăхĕпе пĕр-пĕринчен пит уйрăлсах тăмаççĕ.

– Пирĕн таса продукци – çынсен çирĕп сывлăхĕ. Çакна шута хурса ĕçлетпĕр. Ку тĕллевпех ветеринари ĕçĕсене те вăхăтра тума тăрăшатпăр. Пирĕн тăрăшулăха шута хурса ĕне сăвакансем те пуçарулăх кăтартаççĕ, сăвăма ӳстерес çулпа пыраççĕ, – терĕ 30-мĕш çул «Свобода» хуçалăхăн Çатракассинчи ĕне ферминче выльăх сывлăхĕн хуралĕнче тăракан Галина Алексеевна Григорьева юлташĕн ĕçĕсем епле пынипе кăсăкланса.

– Хуçалăхри 251 ĕнерен эпир те йӳнĕрех хăйхаклăхпа çителĕклĕ продукци илессишĕн тăрăшатпăр. Вăрттăнлăх мар, кунта ветеринари ĕçĕ-хĕлĕн тӳпи те тивĕçлĕ вырăн йышăнать. Иртнĕ çул ферма ĕçченĕсем тăрăшнипе хуçалăхра 100 ĕне пуçне 89 пăру илтĕмĕр, – хуравларĕ Л. Федорова хĕр-тусĕн ӳсĕмĕсемпе паллашнă май хăйсем талăксерен мĕн чухлĕ сĕт сунине палăртса.

Хăйсен ĕç пурнăçне выльăх-чĕрлĕх отрасльне халалланă хĕрарăмсем иккĕшĕ те виçшер ача çуратса пурнăç çулĕ çине кăларнă. «Ĕçрен хăрамасан пурнăç ăнать», – терĕç туссем хăйсем йывăрлăха парăнма хăнăхманнине кăтартса тата ыттисене те çапла пулма чĕнсе.

Икĕ хуçалăхра та выльăх фермисем хĕле хатĕр. Апла пулсан Çатракассисемпе Уйкас Янасалсем хĕл кунĕсенче те продуктивлăха çӳллĕ шайра тытасси пирки иккĕленӳ çук.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Сентябрĕн 28-мĕшĕнчен октябрĕн 5-мĕшĕччен – Пĕтĕм тĕнчери сывă чĕре эрни

# Сывă чĕре ырă шанăç çуратать

Сывлăх пулсан ыттине туянма пулать тетпĕр те, анчах чылай чух кулленхи ĕçсене пурнăçлассине мала кăларса сывлăх пирки шутланине иккĕмĕш вырăна хăваратпăр. Пĕр кун çапла пулать, икĕ кун... Кайран вара чавса çывăх та çыртма çук. Пĕтĕм тĕнчери сывлăха сыхлас организаци юлашки вăхăтра çулсеренех сывă чĕре кунне ирттересси ырă йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. Кăçал ку тĕлĕшпе сентябрĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 5-мĕшĕччен Пĕтĕм тĕнчери сывă чĕре эрни ирттерес тесе çирĕплетнĕ. Ăна тивĕçлĕ шайра пурнăçлас тесе Чăваш Республикинче туса ирттермелли ятарлă ĕçсен планне çирĕплетнĕ. Çак ĕçрен районти сывлăх сыхлавĕ те айккинче юлмасть. Ăна валли эпир хамăр ĕç планне туса хатĕрлерĕмĕр. Унпа килĕшӳллĕн çак эрнере районти тĕп больницăра чĕре чирĕпе аптăракансем валли уçă алăксен вăхăчĕ пулать. Çавăнта пыракансем ун чух чĕре чирĕнчен тата юн пусăмĕпе аптăранинчен хăш-пĕр эмелсене тӳлевсĕрех илме пултараççĕ. Çакна валли вĕсен хăйсем çумĕнче амбулатори кĕнекипе страхланнă полис кăна пулмалла. Асăннă вăхăтра кунпа пĕрлех районти шкулсенче «Чĕрепе сосуд чирĕсен профилактики» темăпа уçă калаçусем иртĕç. Вĕсен тĕллевĕ – сывă чĕре ĕçĕ çынсенче пурнăç сукмакĕпе çирĕппĕн утмалли шанăçĕ.

Сывă чĕре. Кирек камшăн та пысăк пĕлтерĕшлĕ вăл. Сывă чĕре кăна пурнăç çине çутă шанчăкпа пăхтарать, çĕнĕ тĕллевсем çуратать, пурнăç илемне туллин кăтартать-туйтарать. Çакна шута илсе тата пирĕн хушăмăрта чĕре чирĕпе, юн пусăмĕ пысăккипе аптăракансем пуррине пĕлсе хаçат вулавçисемпе уçă калаçăва тухас терĕм. Калаçмалли вара çук мар. Чĕрепе сосуд чирĕсене пула вилесси – кирек хăш çĕршывра та малти вырăнсенче. Çав шутра Раççей Федерацийĕнче те.

Хамăрăн паянхи калаçура кĕскен стенокарди тата гипертони чирĕсем çинче чарăнса тăрар-ха. Стенокарди вăл – чĕрен ишеми чирĕн пĕр форми. Ку чир чĕрен тĕп артерийĕсем хĕсĕннипе е атеросклеротика тăхисемпе питĕрĕннипе палăрса тăрать. Чĕрепе сосуд чирĕсене çул паракан тĕп сăлтавĕ – атеросклероз. Çавсене пула чĕрене кислород тата апатлану хатĕрĕсем сахал пыма пуçлаççĕ. Мĕн тумалла ку чухне? Малтанах пирус туртма, эрех ĕçме пăрахмалла, врачпа палăртса физкультура упражненийĕсем тумалла, ӳсен-тăран çăвĕпе хатĕрленĕ апат çимелле, тухтăр палăртнă эмелсене ĕçмелле.

Гипертони вăл – юн пусăмĕ пысăкки. Кунта врач сире кăна сĕннĕ эмелсемпе сипленни вырăнлă. Кунпа пĕрлех тăвар сахалрах çини, пируспа эрехрен пăрăнни, кĕлетке йывăрăшне чакарни пĕлтерĕшлĕ. Çак лару-тăрура тырă продукчĕсем, чĕрĕ пахча çимĕç, пăспа пĕçернĕ пахча çимĕç, оливка çăвĕ, çуран уйăрнă сырсемпе соуссем, сĕт продукчĕсем сирĕн тĕп юлташ пулмалла. Кунпа пĕрлех васкаса утни, çăмăллăн чупни, йĕлтĕрпе ярăнни, эрнере 5 хутчен 30 – 40-шер минут велосипедпа çӳрени пысăк усă кӳрет.

Çӳлерех каланине шута илсен, çынсен сывă пурнăç йĕркине тытса физкультурăпа çывăхрах туслашмалли курăнать. Чĕрепе сосуд чирĕсенчен пăрăнса иртме диетăна пăхăнни те пысăк пулăшу парать. Кун пек чух кăна чĕре çăмăллăн та тикĕссĕн, тăхтавсăр ĕçлĕ, чĕрепе сосуд чирĕсем пирĕнтен аякра тăрĕç.

**И. КОРОЛЬКОВА,**
**районти тĕп больницăн терапи уйрăмĕн ертӳçи, кардиолог.**

«Иккĕмĕш çăкăр» пуссисенче

# Уяр кунăн кашни сехечĕпе туллин усă куратпăр



Копалкăсем тенĕрен, кăçалхи кĕрхи ĕçсем хуçалăхсенче ĕçлекенсем сахалланнине туллин кăтартса пачĕç. Апла пулсан çĕр улми кăларас ĕçре те малашне комбайнсем тĕп вырăна тухмалла. Çакна паян кашниех ăнланса илчĕ. Комбайнсем пуррисем вара хăйсем мал ĕмĕтлĕ тата ыранхи куна пăхса ĕçленине кăтартса пачĕç. «Иккĕмĕш çăкăр» пуссисенче кăçал «Ударник» хуçалăхăн 6 комбайнĕ, «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн комбайнĕ, В. Бархаткин тата Толстов фермерсен, «Агросоюз» комбайнĕсем пысăк усă кăтартрĕç. Ку ĕç малалла пырать, кăлармалли çĕр улми иртнĕ эрне кун тĕлне татах 400 гектара яхăнччĕ.

Çĕр улми пуçтарас ĕçре район администрацийĕн пуçлăхĕн чĕнĕвне шута илнисен шутĕнче маларах каланă коллективсемсĕр пуçне – Йăла çуртĕнче ĕçлекенсем, пенси фончĕн коллективĕ. Ку вăхăтри тивĕçлĕ пулăшушăн кашниех тав сăмахне тивĕç вĕсем. Çак туслă хутшăну малашне те сӳнмессе шанас килет.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Район администрацийĕнче ĕçлекенсем те çак йывăр вăхăтра ял çыннисенчен аякра юлмарĕç. Кунтан кулленех 15-20 çын «Свобода» хуçалăх хирĕсене çӳрерĕ, копалкăсем кăларнă вуншар тонна çĕр улмине çанталăк çумăрсăр тăнă вăхăтра хранилищĕсене кĕртсе хучĕ. Район администрацийĕн ĕçченĕсем пулăшни ку хуçалăхăн уй-хирĕсенче çĕр улми кăларас ĕç пуçланнăранпах вăй хуракан шкул ачисемшĕн пысăк тĕкĕ пулчĕ. Аслисен пулăшăвне кура ачасем те юлашки кунсенче пысăк активлăх кăтартрĕç.

– Çĕр улмине вăхăтра ытлă-çитлĕ лартнă атте-аннесем кĕр çитсен ăна пухса кĕртессинчен пăрăнса юлассăнах туйăнсаччĕ. Пĕрле ĕçлесен вара ĕç те кал-кал каять. Кунашкал тăрăшулăхпа çитес кунсенчех çĕр улми кăларас ĕçе вĕçлĕпĕр, – терĕç тулли витрене михĕне пушатнă май Максимпа Луиза **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре).**

И. Васильевпа П. Ишаков механизаторсем хăйсене çирĕплетсе панă копалкăсене çак вăхăтра пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерчĕç. Ачасемпе аслисем вара ăнса пулнă çĕр улмине пуçтарчĕç те пуçтарчĕç **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре)**. Хирте тулли михĕсем йышлансах пычĕç.



Килти хушма хуçалăх

# Выльăх-чĕрлĕх хĕле хатĕрленет

**Мăйракаллă шултра выльăх.** Кăçалхи çу кунĕсем ăшăпа палăрчĕç пулин те, çут çанталăк майĕпен хĕл еннеллех сулăнать. Çак вăхăтра хресчен выльăхсене хĕл условийĕсене куçарма хатĕрлет. Уйсемпе çарансем пушаннă май выльăхсем валли ешĕл апат сахалланать. Çавна май вĕсене килте хушма апат пама пуçламалла.

Çанталăк, кун йĕрки улшăннине выльăхсем хăвăрт туяççĕ, вĕсем начартарах çиме пуçлаççĕ.

Çу каçа пахча çимĕç, купăста, тымар çимĕç ӳснĕ лаптăксене кăларса ярас умĕн ял çыннин выльăхсене утă-улăм пани вырăнлă. Çакă вĕсене кӳпĕнесрен хӳтĕлет.

Самăртма хупнă выльăх-чĕрлĕх ешĕл апатпа кăна тăрантарсан сахал ӳт хушать. Çавăнпа та кĕрхи вăхăтра выльăхсен рационне концентрат хушма тăрăшмалла. Çакă какая тутлăрах та пахарах тăвать.

Таврара йĕпе çанталăк хуçаланма пуçланă май витесенче ай сарăмсене тасатсах тăмалла. Тислĕке вăхăтра кăлармасан витере сиенлĕ газсем пухăнаççĕ те выльăхсене чирлеттерме пултараççĕ.



**Сыснасем.** Ултă-çичĕ уйăхри сыснасем 100 е ытларах килограмм та тайма пултараççĕ. Анчах хăшĕсем сыснасене çак виçе чухлĕ кăна тăрантарни усăллах мар, вĕсене 200-250 килограмм таран самăртни çеç вырăнлăрах тесе шутлаççĕ. Çапах та, ятарласа тĕпченĕ тăрăх, сыснасем, тĕпрен илсен, 110 килограма çити самăртсан кăна паха та тачка какайлă пулаççĕ. Унран ирттерсен сыснасен çу кăна хушăнса пырать.

Çамрăк çурасене тачка какайлă самăртас тесен рационта концентрат виçи 60-70 процент, сало илес тесен вара çĕр улмипе тымар çимĕçĕн виçи ытларах пулмалла.

Самăртма хупнă сыснана шыв çителĕклĕ памалла. Куллен кашни выльăх 15 литра яхăн шыв ĕçет. Шыв сахал пулсан сыснасем ӳт начар хушаççĕ.

**Ю. КРАВЦОВ, зоотехник.**

# Хурлăхана та çĕнетмелле

Ялта пурăнакансем çырла тĕммисемпе лаптăкĕсене çĕнетсех тăмаллине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Анчах та темшĕн-çке хурлăхан пирки час-часах аса та илмеççĕ. Нумайăшĕ хăйсен пахчинче 20 çултан та иртнĕ ӳсен-тăрансенчен çырла сахал пухса илнишĕн пăшăрханать, хурт-кăпшанкăна тата çанталăк условийĕсене айăплать. Çакна кура вĕсем çырла тĕммисем ватăлса вăйсăрланнине асăрхамаççĕ те тейĕн.

Хурлăхан тĕмми çырла кӳме тытăнсан малтанхи 6-7 çулне тухăçпа савăнтарать. Тураттисене вăхăтра касса, тасатса тăманни çак вăхăта 5 çул таран кĕскетет. Çавăнпа та вĕсене çуллен тымартан тухакан 2-3 хунав хăварса çамрăклатмалла. Ку майпа 5 çулхи тĕмре тĕрлĕ ӳсĕмри 10-15 турат пулмалла.

Вăхăт иртнĕçемĕн 7-8 çулхи тĕмсене улăштарма тытăнмалла. Çамрăккисем вăй илсе пынă тапхăрта ватăраххисем сире çырласемпе туллин тивĕçтерĕç. Çавăнпа та каярахпа вĕсене кăкласан та эсир çимĕçсĕр юлмăр.

Хура хурлăхана ĕрчетме кăткăсах та мар. Сыпмалли туратсене кĕркунне кăпăшка та пулăхлă тăпра çине тăрăнтарса хăвармалла та тепĕр çултан вĕсем куçарса лартма хатĕр пулаççĕ те.

Юлашки вăхăтра селекционерсем чир-чĕре парăнман, шултра çырлаллă, тутлă та сĕткенлĕ сортсем чылай кăларнă: Ядреная, Перун, Сокровище, Илья Муромец, Елочка, Ароматная, Дачница, Русалка, Вологда.

**В. ПАХАНОВ.**

Шалти ĕçсен пайĕ пĕлтерет

# Цыгансенчен асăрханăр

Авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи пĕр яла 18 сехет тĕлĕнче икĕ цыганка пырса кĕреççĕ. Ял тăрăх иртнĕ май çумăр çунинчен тарса пĕччен пурăнакан çулсенчи хĕрарăм патне кĕреççĕ. Хăйсем йывăрлăха лекни пирки ăнлантарса, хайхискерсем хĕрарăмран çĕр каçма ыйтаççĕ. Инкек тӳсекене ялан пулăшма хатĕр чăваш хĕрарăмĕ хирĕçлемест, çĕр выртма вырăн хатĕрлесе парать. Йăлтах йĕркеллĕ темелле, анчах тăруках никамăн та ыйхă килмест. Калаçу урапи хăйĕннех тăвать. Ăна-кăна калаçкаласан пĕр цыганка хĕрарăма усал сунакан çынсем тухатнинчен юмăç пăхса пама, çав вăхăтра пулнă чиртен сыватма пулать. Хăй хваттере янипе юмăççем укçа-темĕн ыйтманран хĕрарăм хирĕçлемест. Çапла вара килĕшӳ çулĕ тупса цыганка хĕрарăмран стакан, Турă шывĕ ыйтать, шыва сахăр ярса пăтратать, «сывату» сăмахĕсем калать. Хыççăн çак шыва кил хуçине ĕçтерет. Сывалас кăмăл пысăк, çын усал тунинчен тасалас килет – хĕрарăм «сывату» шывне тĕппипех çавăрса хурать...

Вăл вăраннă тĕле хĕвел тухнă ĕнтĕ. Пуç ыратать, пӳртре цыганкăсем курăнмаççĕ, укçа хунă вырăна пырса пăхать те 40 пин тенкĕ «вĕçсе тухса кайнă». Кунашкал ыйту паян милици ĕçченĕсене те канăç памасть.

Ял çыннисем! Çапла ан пулса тухтăр тесен çĕр выртма палламан çынсене ан кĕртĕр, асăрханулăха самантлăха та ан çухатăр!

**М. МЯСНИКОВ, районти уголовнăй шырав пайĕн аслă оперуполномоченнăйĕ.**